# Çитĕнӳсем хамăр алăра



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

# Çутçанталăкшăн, ял хăтлăхĕшĕн тăрăшать

**«Çитĕнӳсем хамăр алăра» проектăн черетлĕ кăларăмĕ пирки шухăшланă, пуç ватнă вăхăтсенче ал айне «Ял ĕçченĕ» хаçатăн виçĕ çул каяллахи номерĕ лекрĕ, куç умне тӳрех «Икĕ кун нимере» ятпа çапăнса тухнă сăн ӳкерчĕкпе кĕскен çырса кăтартни курăнчĕ. «Ял çыннисемшĕн урамсенче çулсем япăххи, кĕперсем юсавсăрри çивĕч ыйтусем шутланаççĕ. Ялти хастарсен пуçарăвĕпе хăш-пĕр çĕрте чăвашсен ырă йăлипе нимелле ĕçлесе татса пама тăрăшаççĕ çав ыйтусенчен хăшне-пĕрне. Чыс та мухтав çавăн пек çынсене тесе калас килет. Акă иртнĕ канмалли кунсенче Çĕнçырма ялĕнчи арçынсем нимене пухăнса унчченхи пахча çывăхĕнчи шыв урлă каçмалли кĕпере юсассипе икĕ кун вăй хурса ĕçлерĕç» тенĕ сăн ӳкерчĕк айне çырса кăтартнинче. Унтах нимене хутшăннă хастарсен ячĕсене те асăннă: ял старости Ф.Г.Максимов, М.А.Никитин депутат, В.Н.Павлов, Н.А.Афанасьев, В.В.Моисеев, В.А.Сергеев, Е.Г.Емельянов, М.В.Максимова, В.В.Николаев, А.В.Павлов тата Г.В.Васильев. Çав тери пысăк ĕç темех те çук ĕнтĕ ăна, анчах ял халăхĕшĕн çакă та хăйне евĕр çитĕнӳ – асăннă кĕпер урлă вун-вун, çĕршер çын каçса çӳрет, пĕр-пĕринпе хутшăнать, çитес çĕре çитсе килет, унта-кунта çула тухать.**

Çакнашкал е чылай сулмаклăрах ĕçсем, çитĕнӳсем Эл енче сахал мар пурнăçа кĕрсе пыраççĕ, çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатаççĕ, ялсен хăтлăхне, илĕртӳлĕхне ӳстереççĕ. Ку тĕлĕшпе федераллă, республика тата вырăнти, граждансен бюджет пуçарулăхĕн программисем нумай ырă кӳреççĕ. Пĕлтĕрпе виçĕмçул Элпусĕнче кăна Ленин тата К.Маркс урамĕсенче вак чула хытарса çул сарнă. Çул айккипе тротуар та хывнă – ун тăрăх хам та утса курнă. Кăçал Ураскассинчи Сормов урамĕнче 450 метр тăршшĕ ытла çул тунă, пĕлтĕр унтах фельдшерпа акушер пункчĕ ĕçе кĕнĕ. Халĕ Çĕнçырма ялĕнче Ленинградская урампа Пушкин урамне каçнă çĕрте вак чул сарса çул тăваççĕ, подрядчик – Шупашкарти «Гудвил» ООО – ĕçе пуçăннă ĕнтĕ. Чăваш автономине туса хунăранпа 100 çул çитнĕ ятпа кашни яла уйăракан 100 пин тенкĕпе вара кунта ача-пăча площадки тума палăртаççĕ. Нӳшкассинче, ял варринче, çакнашкал площадка хута кайнă та ĕнтĕ, унта халĕ кашни кунах ача-пăча савăнать. Шупашкарти «Эконика» ООО ĕçченĕсем тăрăшнă асăннă объектра. Элпусĕнче те ача-пăча площадки тунă кăçал. Кĕçех вăл Çĕнçырмасен те пулĕ – яла паракан 100 пин тенкĕне çак тĕллевпе усă курма палăртаççĕ. Вулакансем манман пулĕ-ха, виçĕмçул хаçатра Çĕнçырмара 100 вырăнлăх вĕр-çĕнĕ клуб хута кайни çинчен те çырса кăтартнăччĕ. Ăна граждансен бюджет пуçарулăхĕн программипе тунă. Ку тăрăхра ял-ялĕнче шыв башнисем те çĕнĕрен хăпартаççĕ. Нӳшкассинче вара шыв пăрăхĕсем хывса тухнă, шыв башнине те çĕнетнĕ, киллене ĕçмелли шыв кĕртнĕ, яшка лартса яратăн-и, савăт-сапа çăватăн-и е чей вĕрететĕн – шыв ал айĕнче хыв. Фельдшерпа акушер пункчĕ те юлашки çулсенче хăпартни. Октябрь урамĕнче вара çак кунсенче 330 метр тăршшĕ çула вак чул сарса хытармашкăн канав чавса хатĕрлеме тытăннă. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.М.Гавриловпа ял старости те унтаччĕ чавма пуçланă кун. Кăçалах тренажерпа волейбол площадки тăвас ĕмĕтпе те пурăнаççĕ ял çыннисем. А.В.Гурьев староста вĕсен выранне те кăтартрĕ. «Техника кирлĕ халĕ çĕре тикĕслеме»,–терĕ. Хăй вăл маларах çеç кирпĕч ванчăкĕсемпе тăм тăкнă урама тракторпа тикĕслесе хытаратчĕ.

Пархатарлă нумай ĕç ялсенче пурăнакансен пултарулăхĕпе, вĕсен хастарлăхĕпе пулса пырать. Нӳшкасси ялĕнче те çавах. Акă мĕнле сăнласа парать çакна Нӳшкассинче пурăнакан паллă сăвăç, икĕ кĕнеке авторĕ Елена Андреевна Фомина (Иванова) хăйĕн 2012 çулхи çу уйăхĕнче шăрçаланă «Нӳшкасси» сăввинче:

Хитреленсех пырать юратнă ялăм.
Газ пур кунта, ак шыв кĕрет.
Куçпа курса, чунпа туйса тăратăп:
Кашни çыннăн чĕрийĕ çĕкленет.
Кунта пĕрне-пĕри сывлăх сунаççĕ,
Ниме туса çĕклеççĕ керменсем.
Йывăрлăхра хăраххăн хăвармаççĕ,
Таса та ырă кăмăллă çынсем...

Çапла, ял тĕнчепе асфальтлă çулпа çыхăннă, Серго урамĕ те лавкка таран асфальтлă, вак чул сарнă урамсем те пур, пур килте те «сенкер çулăм» çунать, ĕçмелли шыв та кĕнĕ килсене, урамсенче çĕнĕ те хăтлă çуртсем çĕкленеççĕ. Юратнă кĕтес пуянлансах, инфраструктура объекчĕсем çĕнелсе пыни, урамсем тирпейлĕ, çап-çутă, кил-килсенче ача сасси пулни, çынсем юратнă ялшăн тăрăшни çинчен хăпартланса çырать сăвăç.

«Халăх сурсан, чăнах, кӳлĕ тăваççĕ»,–тесе пĕтĕмлетет. Нӳшкасси ялĕнчи Серго урамĕнче вунтăххăрмĕш çуртра пурăнакан Михаил Иванович Фомина та çав халăхăн уйрăлми пайĕ тесе хаклассăм килет манăн. Вăл – Елена Андреевнан юратнă мăшăрĕ. Акă мĕнле йĕркесем халанă вăл мăшăрĕ утмăл тултарсан:

«Санпа чух çак тĕнче
Юмахри пек хитре.
Санпа лайăх чуна,
Эсĕ кирлĕ мана.
Пул телейлĕ ялан,
Нихăçан ан чирле.
Çăлтăр евĕр çунса
Савăнтар чĕрене...»

«Çулсене шутлар мар, пурнăçпа савăнар» тесе вĕçлет сăввине, пурнăç тĕллевĕпе тупсăмĕ, савăнăçĕпе телейĕ хăйсенче тĕвĕленнине палăртать. Михаил Иванович, ялтилле Мишша, асăннă ятпа 1953 çулхи кăрлачăн 13-мĕшĕнче çуралнă, шкулта вĕреннĕ, ачаранах тăван тавралăха, çутçанталăка юратса ӳснĕ, çакă туртăм унăн ĕмĕрлĕхе чĕрине кĕрсе вырнаçнă. Вăл çамрăкклах çутçанталăкшăн мĕн те пулса ырă тума тăрăшнă. Çар службине кайиччченех ял çырминче йывăçсем лартса чĕртнĕ, çакă ăна тăван тавралăхпа пушшех те çывăхлатнă. Салтакран килсен те, тăван тавралăхшăн питĕ тунсăхласа çитнĕскер, йывăçсем лартса чĕртме тытăннă, хурăнсем, йăмрасем лартнă Нӳш çырмине. Сахал та мар. Çавăн чухне чĕртнисем ку вăхăт тĕлне вăрман пулса кайнă. Малтанхи вăхăтра лартнă хурăнсене вăрттăн касакансем те пулнă. Тăпкăл-тăпкăл, яшăм ярăнса ӳснĕ шурă хурăнсем, пĕве çитнĕ хĕрсем пек, кирек камăн чунне те илĕртнĕ ĕнтĕ. Тахăшĕ чăтайман – вуникĕ хурăнне тĕпренех йăвантарнă... Кĕçех вĕсен вырăнне çĕнĕрен лартса чĕртнĕ Михаил Иванович, çилĕллĕн шăмарса çӳренипе каснă йывăçсене каялла тăратса лартас çуккине ăнланнă вăл. Çынсем киревсĕр ĕç тунине ырă тĕслĕхпе тавăрнă. Ĕмĕрĕн пысăк пайне чукун çул çинче



♦ *Михаил Иванович Фомин*

слесарьте ĕçлесе ирттернĕ вăл. Тӳрĕ кăмăл унта та, ырă юлташ пек, пулăшса пынă ăна. Халĕ ĕнтĕ вунă çул ытла пенсире. Çак хушăра миçе çĕр-çĕр тĕп йывăç лартса чĕртнĕ-ши вăл – калама та йывăр. Аслă ӳсĕмрисем, вăталăххисем, кăçал лартнисем – шутласа та пĕтерейместĕн Михаил Фомин пурнăç парнеленĕ йывăçсене. Лаптăкăн-лаптăкăн паркаланаççĕ вĕсем Нӳш çырмипе унăн хăяккăнĕсенче тата лапамĕсенче. Çамрăклăх çулĕсенче хурăнпа йăмрана ытларах вырăн панă пулсан, халĕ Çĕпĕр юманĕ – лиственница малта тăрать. Лăсăллă йывăçсенчен чăрăшпа хыр калчисем тата çавăн пекех хурăн хунавĕсем те куранкалаççĕ участоксенче, анчах лиственница пуринчен те йышлă. Хăйĕн йывăçĕсем патне Михаил Иванович мана сукмакпа тӳртен илсе кайрĕ, «кунтан çывăхрах», терĕ. Çырмана антăмăр, улăхрăмăр, татах антăмăр. Такăрлатнă ку сукмакпа çынсем те çӳреççĕ иккен. Унччен Тăвайра пурăннă, халĕ Нӳшкассинче мăшăрĕпе тĕпленнĕ Людмила Александровна Иванова тĕл пулчĕ çапла пырсан-пырсан. «Йывăçсем патне васкатăр-и-ха?» терĕ Михаил Ивановича курнă-курман, сывлăх сунчĕ. Хăнăхса çитнĕ ял çыннисем ăна, ăçталла çул тытнине каласăрах пĕлеççĕ. Паян кăна такăрлатмасть вĕт тӳртен сукмака. Ир тăрать те унта васкать. Мăшăрĕ Елена Андреевна каласа кăтартнă тăрăх, çурçĕр иртни иккĕ-виççĕре те тăтăшах тухса каять йывăçсем патне. «Пĕреххут ма лесничи пулман эсĕ тесе те калатăп»,–тет. Михаил Иванович малта утать, мана кăтартса-паллаштарса пырать, кашни йывăçах уйрăммăн пĕлсе тăнăн туйăнать, кашниншĕн савăнни сисĕнет. Лешсем, чăнах та, питĕ маттур аталанаççĕ. «Сăна-ха, пĕлтĕр лартнисем кăçал утмăл-çитмĕл сантиметртан кая мар е ытларах та – пĕр метра яхăн çĕкленнĕ, хăвăрт çитĕнеççĕ»,–чунтан хавхаланать çак йывăçсен «ашшĕ». Вĕсене Элпуç сачĕ пулнă çĕртен, вăрăран шăтнăскерсене, куçарса килсе лартнă, ашшĕ-амăшĕ пек пăхса, «ура» çине тăратать халь, вĕсене аталанма пулăшать. Чи пĕчĕккисем пĕр е икĕ шит çуăран та ытла мар, анчах парка та илемлĕ. Вĕсене пурне те пăхса-типтерлесе тăрать Михаил Иванович: шăварать, кашни йывăç кутнех çумкурăксенчен тасатать, кирлĕ мар турачĕсене иртет. Вун-вун, çĕр-çĕр хунав çапла вăй илсе ешерет тата тĕрекленет. «Шывĕ çукка вĕт-ха сăрт айккинче, мĕнле майпа шăварса тăратăн?»–тетĕп Михаил Ивановича. «Çырмаран лейкăпа йăтатăп»,–лăпкăн кăна хуравлать вăл. Çавăн чухлĕ йывăçа мĕн чухлĕ шыв кирлĕ пулма пултарнине шутласа пăхатăп та, унăн хастарлăхĕнчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп. Вăл вĕт тинех çирĕм-çирĕм пиллĕкре те мар, çиччĕмĕш теçеткене вакласа пыракан çын.

–Килти çимĕç йывăççисемшĕн те ун чухлĕ тăрăшмастăн, Мичурин чĕрĕлсе тăрас пулсан, çаплах тепĕр хут тӳнсе каять вĕт тесе те каласа пăхатăп»,–çавах та ăшĕнче упăшкишĕн мăнаçланса пĕлтерет Елена Андреевна. Сăмах майăн асăнсан, килĕнчи йывăçсем питĕ çимĕçлĕ пулнине, турачĕсем усăнса тăнине асăрханăччĕ.

Çырмари йывăçсене сеткăпа тата çатан картапа çавăрнă выльăх-чĕрлĕх амантасран асăрханса. Сеткине те, çатан карталăх материалсене те хăй хатĕрленĕ. Америка вĕренипе те, хăрнă тата хуçăлнă йывăçсемпе те усă курнă çав тĕллевпе. Кашни япаланах ĕçе кĕртме пĕлет вăл, тĕплĕ çын. Çакăнсăр пуçне кашни хунавпа йывăçах уйрăм хӳтлĕх те туса панă: çамрăккисене çирĕп хулăсемпе патаксенчен виçкĕтеслĕх (пирамида) туса тĕревленĕ, çитĕнерех панисене кашнинех хушма картапа çавăрнă. Урăхла каласан, миçе йывăç, çавăн чухлĕ хӳтлĕх туса панă. Пысăкрах йывăçсене уйрăмшар карталама хуçăлнă е тӳннĕ йывăçсен çуркамĕсемпе, хулăн шалчасемпе усă курнă. Çавăн чухлĕ ĕçе пĕр çын тăвать тесе шухăшлама та йывăр. Сăрт çинчи урамран анакан çул çинчен пăхсассăн, халĕ çĕкленекен пĕр-пĕр сооружени евĕр курăнать ку тăрăх. Çул хĕррипе те лăсăллă йывăçсем – хыр-чăрăш лартса тухнă, хитре пултăр тенĕ, вĕсене ватасран-амантасран сыхланса карталаса хӳтĕленĕ. Çакăн пек шанчăклă алăра Михаил Фомин лартса çитĕнтерекен йывăçсем. Курăк е çумкурăк ашкăрса ларнине те курайман асăннă участоксенче. Кашни хунав-йывăç кутне тасатса-кăпкалатса тăнисĕр пуçне, курăксене талккăшпех çулса, купасене пухса типтерлесе тăрать. Чăрмавсăр, ярăнса ӳсеççĕ йывăçсем. Тепри-тепри килĕнчи темиçе тĕп йывăç-тĕмĕ те кирлĕ пек пăхса типтерлесе тăраймасть пулсан, кунта – талккăшпе йĕркелĕх. Çавăнпа хаваспах, пите хĕретмесĕр пур кăмăлтан кăтартса çӳ-

(Малалли 4-мĕш стр.)

# Тинĕс-çар флочĕн кунĕ – Тăрмăшра



**Июлĕн 26-мĕшĕнче, Раççей Тинĕс-çар флочĕн кунĕнче, Тăрмăшра флотра службăра тăракансене, ветерансене, çĕршыва хӳтĕлесе тĕрлĕ вăрçă конфликчĕсене хутшăннă моряксене асăнса, чысласа палăк уçма палăртни çинчен хаçатра çырнăччĕ.**

**Палăк çумне тинĕс чулĕ вырнаçтарнă, чул çине якорь тайăнтарнă. Ăна тума «Турмышское боевое братство» халăх организацине ертсе пыракан харсăр çамрăксемпе ветерансем чылай тăрăшнă. Вĕсем халăхран ирĕклĕ майпа укçа пуçтарнă, палăкне заказпа тутарса вырнаçтарнă. Якорьне Коломна хулинчен илсе килнĕ. «Порт-Коломна» АО генеральнăй директорĕ В.Я.Алексеев чăваш пулни питех те меллĕ пулнă. Вăл тӳлевсĕр икĕ якорь хатĕрлесе Тăрмăшпа Енĕш Нăрваш ялĕсене парнеленĕ. Пуçарăва ĕçе кĕртме район администрацийĕн пуçлăхĕ В.А.Ванерке пысăк пулăшу панă. Калас пулать, тăрмăшсем хăйсен вăйĕпе маларах Афган вăрçинче интернационалла тивĕçе пурнăçланă воинсене, çавăн пекех десантниксемпе пограничниксене асăнса виçĕ палăк лартнă.**

Асăннă кун флотра службăра пулнисен ячĕпе палăк уçма Чăваш Енĕн тĕрлĕ районĕсенчен, Мускавран ВМФ ветеранĕсем, Тинĕс-çар пехотинецĕсем сахал мар пуçтарăнчĕç. Вĕсем хушшинче тăватă полковник пулчĕ. Делегацие ертсе пыракансем сăмах тухса каларĕç, палăк тума вăй хунисене, çар службин ветеранĕсене медальсем, грамотăсем парса чысларĕç.

Райадминистраци тата район пуçлăхĕсем Владимир Ванеркепе Александр Шакин, Тăрмăш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Вероника Николаева, Раççейри «Сыны Отечества» обществăлла организацин ертӳçи, çар наукисен докторĕ, профессор, Çĕрпӳ районĕнче çуралса ӳснĕ Иван Николаев, Тăрмăш ялĕнче çуралнă, халĕ Мускавра пурăнакан запасри полковник Василий Семенов, республикăри Тинĕс-çар пехотинецĕсен обществăлла уйрăмĕн ертӳçи, III ранглă капитан Андрей Семенов, Шупашкарти полици полковникĕ, росгварди пайĕн начальникĕ Сергей Иванов, афган вăрçин ветеранĕсен Канаш хулипе районĕн уйрăмĕн союзне ертсе пыракан Вячеслав Сергеев сăмах каланă май, Тăрмăш ялĕнчи палăксен комплексне пысăк хак пачĕç.

Тинĕс-çар флочĕн ветеранĕсем палăк умне чечек кăшăлĕ хучĕç, пухăннисем моряксене асăнса шăплăх минучĕ ирттерчĕç.

Çакăн хыççăн пухăннисем кӳршĕллĕ Енĕш Нăрваш ялне çакăн пек тепĕр палăк уçма кайрĕç. Тинĕс-çар флочĕн ветеранĕсемшĕн кăна мар, ял халăхĕшĕн те çак мероприятисем пысăк пĕлтерĕшлĕ уяв пулчĕç.

**В.СИДОРОВ.**
**Тăрмăш – Енĕш Нăрваш.**



# Çутçанталăкшăн, ял хăтлăхĕшĕн тăрăшать

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 3-мĕш стр.)**

рерĕ те хăйĕн йывăç лаптăкĕсене Михаил Иванович. Çав лаптăксенчех кавăнпа кабачок çитĕнтерекен йăрансем те пур. Вĕсене вăл ятарласа кайăксем валли туса илет. Кайăк тусĕ те вăл. «Кайăксем йывăççене хурт-кăпшанкăран хӳтĕлеççĕ, юррипе кăмăла çĕклеççĕ, тавралăха илемлĕрех, хăтлăрах тăваççĕ»,–тет. Шăнкăрчсем валли çуллен вĕллесем туса çакать – хăма касăкĕсенчен те, хăрнă йăмра хăвăлĕсене чавса та ăсталать вĕсене. Кил таврашĕнче 15 шăнкăрч вĕлли пулнине каларĕ. Пĕр вĕлленех икшер пӳлĕмлĕ те тăвать, икĕ мăшăр чĕп кăларса ӳстерме пултартăр, тет. Вĕллене кĕрсе тухмалли шăтăкĕсене, арпаштарасран, пĕр-пĕрне тăвăрлатасран, икĕ енче тăвать. Нӳш çырминчи йывăççем çине те кăçал кăна сакăр вĕлле туса çакнă. Вĕсене пурне те йăмра хăвăлĕсенчен ăсталанă, тăррине хăма тата усă курнă тимĕр листисем касса витнĕ.

Алли-ури çыпăçнăранах ĕнтĕ краеведени музейне те тĕрлĕ япаласем – Алтăр курки, çĕршыв гербĕ тата ытти те ăсталаса тăратнă.

–Кăсăясемшĕн те питĕ ăшталанать. Миçе кило хĕвелçаврăнăш пĕтернĕ-ши? Сало та парать вĕсене,–калаçăва хутшăнать мăшăрĕ.

Сăртран Нӳш çырмине шавласа юхса выртакан çăл патне те çитсе килтĕмĕр. Шăпах унăн сиплĕ шывĕпе шăварса тăрать Михаил Иванович хăй лартнă йывăççене. Çын аллипе тимлĕхĕ çитменрен çăлкуç япăхнă пулнă, çумкурăксем ашкăрнă ун тавра. Елена Фомина сăвăç ăна хӳтĕлесе сăвă та çырса пичетленĕччĕ район хаçатĕнче. Çавăн хыççăн çăлкуçне, ун тавра тасатса типтерленĕ, йĕркене кĕртнĕ, валакне улăштарнă, тарăн ăшлă тимĕр валашка вырнаçтарнă, вăрăм сарлака сак туса лартнă, малтанхи сумне, чапне тавăрнă. Ял çыннисем йышпа пуçтарăнса тунă çакна. Пĕрле эпир нумай пархатарлă ĕç тума пултаратпăр. Ял çыннисемпе пĕрле Елена Андреевнапа мăшăрĕ те чунтан-чĕререн савăнаççĕ ку çăлшăн. Унăн шывĕ тавралăха чĕрĕлĕх парса тăрать, ырлăх кӳрет, сиплĕхĕпе савăнтарать.

Михаил Иванович тăван тавралăхшăн, ял хăтлăхĕшĕн тăвакан ĕç вара чăннипех те пархатарлă. Вăл унăн чунĕ ыйтнипе, çутçанталăкшăн çунса туртăннипе килĕшсе тăрать. Унăн ĕçĕн ахрăмĕ сарăлса пырать. Акă халĕ Николай Андреевичпа Галина Петровна Платоновсем те ывăлĕсемпе пĕрле Нӳш çырмине лиственница, хырпа чăрăш калчисем лартнă. «Вăтăрхĕрĕх тĕпрен кая мар унта»,–тет Галина Петровна. Вылăхсенчен хӳтĕлесе вĕсене, Михаил Иванович пекех, карта çавăрнă, виçкĕтеслĕхсемпе хупăрланă.

**И.ГЛАДКОВ.**

РАÇÇЕЙРЕ

## Раççейре каннăшăн укçа тӳлеççĕ

**Кăçал Раççейре канма шутланă çынсем турпутевка туяннăшăн 5-15 пин тенкĕ таран компенсаци илме пултараççĕ. Кун пирки РФ премьер-министрĕ М.Мишустин Патшалăх Думинче Правительство ĕçĕн отчечĕпе паллаштарнă чухне пĕлтернĕ.**

«Тур мĕнлине кура турпутевкăшăн паракан компенсаци 5–15 пин тенкĕ чухлĕ пулĕ»,– палăртнă премьер-министр. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, компенсаципе тивĕçтерме пурĕ 15 миллиард тенкĕ пăхса хунă.

Çак тӳлеве çулталăк вĕçлениччен Раççейри хăш-пĕр регионта канма путевка туянакансем илме пултарĕç. Регионсен списокне çирĕплетнĕ.

Премьер туроператорсене унччен 3,5 млрд тенкĕ тĕрлĕ субсиди уйăрса панине аса илтернĕ. Апла пулин те çак йышăнăва туризм отраслĕ пурпĕр йывăр лару-тăрура пулнине кура тунă.

## Саккун çирĕпленет

**РФ Патшалăх Думи иртнĕ юнкунхи пленарлă ларура табак туртассине хирĕç кĕрешмелли саккунсем, вăл шутра административлă штрафсем те, малашне вейп, кальян çине сарăлассинчен калакан саккун йышăннă.**

Çапла майпа çĕнĕ саккун хальхи вăхăтра табак продукцийĕ тĕлĕшпе йышăннă чикĕлевсене тата требованисене никотин тытăмĕллĕ ытти пур продукци çине те «сарать». Çавна май электрон сигаретпа, вейппа тата кальянпа усă курас тĕлĕшпе административлă ответлăх та пулать.

КОРОНАВИРУС

# Аслă ăрурисемшĕн тимлĕр

**Район территорийĕнче июлĕн 29-мĕшĕ тĕлне коронавируспа чирленисен шучĕ 108 çынна çитнĕ. Вĕсенчен 100-шĕ сипленсе тухнă. 560 çынна тест тунă.**

Паянхи лару-тăрăва тишкерес пулсан çакна палăртмалла, чирлекенсенчен ытларахăшĕ 60 çултан иртнĕ çынсем. Инфекци ернине çамрăксем туймасан та е чире çăмăллăн ирттерме пултараççĕ. Çапла ыттисемшĕн хăрушлăх пуррине пĕлмесĕрех юлаççĕ. Ваттисене вара чире парăнтарма питех те йывăр. Çуллахи вăхăтра хуласенчен отпуска канма килнĕ тăванĕсенчен те, ватă ашшĕ-амăшне курма килнĕ ачисемпе мăнукĕсенчен те çаклатма пултараççĕ çак хăрушă чире. Çавăнпа кашнинех пысăк ушкăнсенче сахалрах пулма тăрăшмалла. Аслă ӳсĕмри çынсем патне маска тăхăнса пырăр. Ялсенче кинемейсем çурт умĕнчи сак çине тухса калаçса ларма юратаççĕ. Вĕсене пĕр-пĕринчен чир ерес хăрушлăх пысăкки çинчен ăнлантармалла.

Санитари йĕркисене пăхăнассине те тимлĕхе хумалла. Алăсене час-часах супăньпе çумалла, пӳлĕме тăтăшах уçăлтарса тăмалла, дезинфекци хутăшĕпе тасатса тирпейлемеллине асра тытăр.

Паллах, чир пурне те йăлăхтарчĕ. Анчах обществăлла вырăнсенче, суту-илӳ объекчĕсенче маска тăхăнман çынсене асăрхама пулать. Пĕр-пĕрин хушшинчи дистанцие пурте пăхăнмасть. Районта чирлекенсен йышĕ вăраххăн чакса пырать. Çапах та йĕркене пăхăнмаллах.

**А.СТЕПАНОВ, райбольницăн тĕп врачĕ.**

## Фестивале хутшăнĕ

Августăн 8-мĕшĕнче Ижевск хулинче çамрăксен этнокультурин «Тангыра» фестивалĕ иртĕ. Унта Чăваш Енрен «ЯлАр» ушкăн та хутшăнĕ. Фестивале хăйне евĕрлĕ форматпа ирттерме палăртнă. Артистсем «чĕрĕлле» юрлĕç, куракансем вара залра мар, хăйсен машинисенче ларĕç.

Сцена çине Раççейри тĕрлĕ чĕлхепе юрă шăрантаракан ушкăнсем тухĕç.